25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 20 ВЫРСАРНИКУН 220 (6155) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1942 çулта кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе государство планне пурнăçа кĕртмелли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: республикăри колхозсемпе совхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç начах та çителĕксĕр пулса пырать. Кăçалхи сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме сухине пĕтĕмпе те 5,7 процент чухлĕ кăна сухаланă. Улатăр, Куважино, Пăрачкав, Шăмăршă, Йĕпреç тата Комсомольски районсем вара кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тытăнман та. Ĕç çакнашкал япăх пыни райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсем, колхоз председателĕсем, МТС-семпе совхозсен директорĕсем тата политотделсен начальникĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çине, килес çул пысăк тухăçлă çуртырисем пуса илме никĕс хывса хăварас ĕç çине тÿрремĕнех какламасăр пăхнине кăтартса парать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсоветсен исполкомĕсене, колхоз правленийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата политотделсен начальникĕсене çакăн çинчен асăрхаттараççĕ: кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе плана кашни колхозпа совхозра пурнăçа кĕртни кăçалхи çул уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен, кĕрхи çĕртме пуса хăварни çитес çуркунне лашасемпе тракторсен ĕçне çăмăллатать, 1943 çулхи çуракине иртерех те вĕске срокченче, тăпрари нÿрĕхе ытларах сыхласа хăварса туса ирттерме май парать, юлашкинчен тата çакна та асра тытмалла — колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче кăçалхи çуркунне çĕре ăшăх сухаланине пула, тырпула пухса кĕртнĕ хыççăн хăмăллă пусăсене начар типтерлесе сухаланине пула уйхирте çумкурăкĕсем йышлă пулчĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

Райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене тата колхозсен правленийĕсене çак ĕçсене тума хушас:

1. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе государство панă плана кашни колхозпа совхоз тăрăх пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле, кĕрхи çĕртме ĕçне çĕр шăнличченех пĕр чарăнмасăр туса пымалла.

2. Кĕрхи çĕртме сухине 18—20 сантиметртан ăшăх мар сухаламалла. Кĕрхи çĕртмене ăшăх тăвассине чармалла. Сухаламалли тăпра сийĕ ăшăх çĕрте кăна 18 сантиметртан ăшăхрах сухаламалла тăвас, анчах çапла тума МТС-ăн, райçĕрĕç пайĕн агрономĕ ирĕк парсан кăна юрать.

3. Кĕрхи çĕртме ĕçне пĕр чăрмавсăр туса пырас тата вырнă хыççăн юлнă улăмсене упраса хăварас шутпа, кĕрхи çĕртме тума тивĕçлĕ пусăсенче вырнă хыççăн юлнă арпа-улăмсене вăхăтра пухса илмелле.

4. Техникăллă культурăсем акма, пахча-çимĕçсемпе çĕрулми лартма палăртнă çĕр лаптăкĕсем çинче кĕрхи çĕртмене иртерех тумалла. Çуртырисем акма палăртнă мĕнпур çĕр лаптăкĕсем çинче машинно-тракторнăй станцисем, совхозсемпе колхозсем кĕрхи çĕртме туса хăварма ĕлкĕреймесçĕ пулсан, кĕрхи çĕртме тума тивĕçлĕ участоксенче пур çĕрте те хăмăллă пусса нумай касăллă плугсемпе, лущильниксемпе тата дисклă плугсемпе 5—6 сантиметр тарăнăш çемçетсе хăвармалла.

5. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе районсем тăрăх кашни ĕçлекен лаша пуçне сезонра тивекен нормăсене, çак постановлени çумне хушса çырнăскерсене, çирĕплетес.

Райсоветсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе кашни ĕçлекен лаша пуçне сезонра кашни колхоз тăрăх тивекен нормăсене тума хушас.

6. Кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа кĕрхи çĕртме тунă çĕре мĕнпур ĕçлекен лашасемпе вăкăрсен 40 процентне куçармалла тата вĕсемпе хуçалăхри шалти тĕрлĕ ĕçсенче усă курассине мĕн май килнĕ таранах чакармалла.

ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене тата МТС политотделĕсен начальникĕсене колхозсен председателĕсемпе пĕрле кашни колхозра кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа пĕтĕмĕшпех кĕрхи çĕртме тунă çĕре куçармалли лашасен хисепне палăртса тухма хушас.

7. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕç тухăçлăхне ÿстерес шутпа лашасене сменăсем тăрăх улăштарса ĕçлеттермелли майпа анлăн усă курмалла тата кашни плуг валли плуг тимрисем çителĕклĕ таран юсаса, хăйраса тумалла.

8. Авăн çапас ĕçрен пушанна тракторсене пурне те халех кĕрхи çĕртме тунă çĕре куçарас.

Кĕрхи çĕртме тумалли сезонра нормăсене пурнăçа кĕртес ĕçре трактористсене хавхалантарса пырас шутпа тракторсене, кĕрхи çĕртме тумалли е хăмăллă пусăна çемçетсе хăвармалли хăйсен сезонри нормине, çемçе суха çине куçарса шутласа, октябрĕн 10-мĕшчен пурнăçа кĕртнĕскерсене, 1942 çулта çапла тÿлемелле тăвас: СХТЗ тракторпа — 60 гектар, СТЗ—НАТИ — 100 гектар, ЧТЗ тракторпа — 140 гектар, газогенераторлă СХТЗ—НАТИ тракторпа — 90 гектар тата газогенераторлă ЧТЗ тракторпа — 130 гектар сухаланă пулсан, МТС-сенче 60-шар ĕçкунĕ чухлĕ преми, совхозсенче вара — сентябрь уйăхĕшĕн шутласа панă ĕçукçи чухлĕ преми памалла.

Çулте кăтартнă сезонра нормăсене ирттерсе тултарнă пулсан, нормăран ирттерсе сухаланă кашни гектаршăн МТС-ри трактористсене ĕçкунĕсем 1,5 хут ÿстерсе, совхозсенчи трактористсене халиччехи расценкăсенчен 1,5 хут ÿстерсе укçан тÿлемелле.

9. Колхозсене çапла тума сĕнес: кĕрхи çĕртме тумалли сезонри нормăна тултарнă колхозниксене вуншар ĕçкунĕ чухлĕ премии памалла, сезонри нормăна ирттерсе тултарнă пулсан, çав нормăран ирттерсе сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсене икĕ хут ÿстерсе памалла.

10. Колхозсене çапла ăнлантарса парас: кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлекен колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх аванс шучĕпе тĕштырă парассине уборкăра ĕçлекен колхозниксене пама йышăннă пекех памалла.

11. Райсовет исполкомĕсен председателĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, политотделсен начальникĕсене тата колхоз председателĕсене трактор бригадисенчи тата колхозсен хирти станĕсенчи куçса çÿрекен вагонсемпе хÿшĕсене ăшă тытмалла тума хушас.

12. ВКП(б) райкомĕсене тата МТС-семпе совхозсен политотдел начальникĕсене кĕрхи çĕртме тумалли плана хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн тата ирттерсе пурнăçа кĕртессишĕн колхозсемпе совхозсем, бригадăсем, трактористсем тата колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн организацилеме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1942 ÇУЛТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ТĔЛĔШПЕ КАШНИ ĔÇЛЕКЕН ЛАША ПУÇНЕ ТИВЕКЕН СЕЗОНРИ НОРМĂСЕМ

Районсем	Сухаламалли норма (гектарпа)	Районсем	Сухаламалли норма (гектарпа)
Улатăр	10	Пăрачкав	10
Элĕк	8	Советски	8
Вăрнар	8	Сĕнтĕр	7
Йĕпреç	7	Вăрмар	10
Иччлей	9	Çĕрпÿ	8
Калинински	7	Шупашкар	7
Канаш	7	Чкаловски	10
Куславкка	10	Шăмăршă	10
Комсомольски	10	Шăхасан	7
Красноармейски	7	Çĕмĕрле	7
Хĕрлĕ Чутай	8	Етĕрне	9
Куважино	10	Елчĕк	10
Сĕнтĕрвăрри	9	Тăвай	8
Октябрьски	9	Шупашкар хули	5
Первомайски	9	ЧАССР тăрăх	9

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Уяв умĕнхи ăмăрту анлă сарăлать

КАНАШ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). «Хăвăрт та тухăçлăн, фронтри пек ĕçлесе, Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыв валли грузсене кирлĕ çĕре вăхăтра илсе çитерер» тенĕ лозунгпа сарăлса пырать железнодорожниксен Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвĕ.

Аслă уява çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илес тесе, паровозсен Канашри деповĕнче ĕçлекенсем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

депори мĕнпур хуçалăха вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕлре ĕçлемешкĕн октябрĕн 1-мĕш тĕлне хатĕрлесе çитерме;

топливăна 15 процент перекетлеме;

депори кашни рабочие нормăна 200 процент таран тултарса ĕçлекен тума;

депо паровозĕсене пурне те 100 процентпех график тăрăх ĕçлеттерме;

çуса тасатса юсанă чухне паровозсем усăсăр тăрассине планпа пăхниччен секет çурă чакарма;

рационализацилле сĕнÿсене 10 таран пухма;

çĕнĕрен 150 рабочи вĕрентсе хатĕрлеме, вăл шутран машинистсем 40 çын, машинист помощникĕсем 70 çын, кочегарсем 40 çын хатĕрлеме;

юсавлă мар паровозсен хисепне нормăпа пăхниччен 2 процент ытларах чакарма;

паровозсене пурне те вутăпа хутмалла тăвассине йĕркелесе çитерме пулнă.

Хĕллехи вăхăтра чутунçул пĕр чăрмавсăр ĕçлесси паровозсем юсавлă пулнинчен, вĕсене типтерлĕ тыткаланинчен чылай килет. Пĕлтĕр Канаш деповĕнче хăшпĕр паровозсене тĕплĕн ăшăтман пирки вĕсене çÿремелли вăхăтра час-часах юсама тивнĕ. Çавăнпа хăшпĕр чухне посадсене паровозсем вăхăтра памаррисем те пулнă. Пĕлтĕрхи йăнăшсене шута илсе, паровозсене лайăх юсаса, тĕплĕн ăшăтса çитерес тĕлĕшпе депори рабочисем тимлĕн ĕçлеççĕ. Ку ĕçре государство укçине расходламасăр паянхи кун тĕлне 18 паровоза ăшăтнă. Çак шутран 3 паровоза депора ĕçлекенсен килхуçи хĕрарăмĕсем ăшăтнă. Машинистсенчен уйрăмах Харитонов, Савоничев, Звездин, машинист-орденоносец Л. Николаев юлташсем хăйсен бригадисемпех паровозсене хĕлле ĕçлеме лайăх хатĕрлесе çитернĕ.

Депо машинисчĕсем, машинист помощникĕсем, кочегарсем пурте эксплоатаци техникин правилисене тата сигнализаци правилисене пĕлни çинчен экзаменсем тытнă. Халĕ машинистсем чылайĕшĕ хĕлле ĕçлемелли инструкцисене вĕренсе çитни çинчен испытанисем тытаççĕ.

Социализмлă ăмăртăва тухнă хыççăн, паровозсен бригадисем татах та пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеме пуçланă. Машинист Тимофеев сентябрĕн 17-мĕшĕнче Канашпа Çĕмĕрле хушшинчи çулпа 1200 тонна йывăрĕш, вăрăм составлă поезда, паровозне вутăпа хутнă пулсан та, расписанире кăтартнă вăхăтра илсе çитернĕ. Машинистсем Харитонов, орденоносец Николаев юлташсем аван ĕçлеççĕ, поездсене илсе çÿретессин техникăллă хăвăртлăхĕсене пурнăçа кĕртеççĕ.

Паровозсене хĕлле ĕçлеме хатĕрлессипе мастер Черкасов юлташ ертсе пыракан комплекслă бригада та лайăхрах ĕçлеме тытăннă.

П. НИКОЛАЕВ.

Куллен кирлĕ таварсем тăвакансен сăмахĕ

КУСЛАВККА, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Владимир Ильич ячĕпе тăракан заводăн коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине райпромкомбинатри рабочисем пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яврĕç. Комбинатри рабочисем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

çĕршывпа фронта валли планпа пăхниччен 20 процент ытларах продукци туса кăларма;

продукцин хăйне ларакан хакне 3 процент чакарма;

топливăна 6 процент сахалтарах расходлама пулчĕç.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме пулса, социализмлă ăмăрту договорĕсем çырчĕç.

«Прогресс» промысла артелĕнче ĕçлекенсен пухăвĕнче сĕвĕç Левицкий юлташ:

— Халĕ фронтсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе вăйлатмалла. Хамăр туса тăракан ĕçре ырми-канми ĕçленипе халиччен хинчен ытларах продукци туса кăларар. Эпĕ плана 115 процент таран пурнăçласа пыма сăмах паратăп,—терĕ.

Артельре ĕçлекенсем ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

сентябрь уйăхĕнчи плана 25 процент ирттерсе тултарма;

васкавлă заказсене октябрĕн 25-мĕшчен туса çитерме:

материалсене 3 процент перекетлеме;

планран ирттерсе 200 мăшăр атă-пушмак çĕлесе хатĕрлеме;

3 çамрăка мастерсем пулса ĕçлемешкĕн вĕрентсе хатĕрлеме пулчĕç.

Фронт валли апат-çимĕç хатĕрлекенсен обязательствисем

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарти макарон фабрики коллективĕн митингĕ пулчĕ. Çак митингра фабрика директорĕ Столяров юлташ Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленесси çинчен доклад туса пачĕ. Унтан заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсем тухса каларĕç.

Смена мастерĕ Денисов юлташ пĕр кунхи задание яланах 110 процентран кая мар пурнăçа кĕртсе пыма, машинăсене таса тытса усрама, топливăна перекетлеме, производствăра пулакан тăкаксене 30 процент чакарма, ĕç вăйĕпе туллин усă курма пулчĕ. Хăйĕнпе ăмăртса ĕçлеме тепĕр сменăн мастерне Волова юлташа чĕнчĕ. Çăнăх алакан работница З. Иванова юлташ ĕç нормине 140 процент тултарса пыма пулчĕ. Грузчик Сюсюкин юлташ продукцие хăвăрт тиесе ярас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме, работницăсем Борисовăпа Христусова юлташсем ĕç тухăçлăхне хăпартса пыма сăмах пачĕç.

Главнăй инженер Г. Волков юлташ рабочисене лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма чĕнчĕ, электроэнергипе топливăна перекетлес ĕçсене туса пыма, макарон типĕтмелли виççĕмĕш цеха ĕçе яма пулчĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухса, фабрика коллективĕ сентябрьти плана 16 ĕç кунĕнче тултарма, октябрь уйăхĕнче сентябрьтинчен 50 процент ытларах продукци туса кăларма, брак пĕртте тумасăр ĕçлеме обязательствăсем илчĕ.

Çавăнпа пĕрлех фабрикăра ĕçлекенсем пĕр тонна продукци туса кăларнă çĕрте 3 килограмм çăнăх перекетлеме, электроэнергие нормăна пăхниччен 5 процент, топливăна 10 процент сахалтарах расходлама сăмах пачĕç.

Фабрика макарон типĕтмелли виççĕмĕш цеха ĕçе ямалла, продукцин хăйне ларакан хакне 2 процент чакармалла, кашни рабочин ĕç тухăçлăхне 30 процент ÿстермелле.

Фабрика коллективĕ Хĕрлĕ Çар валли продукци хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарса пыма, продукци турттарма паракан вагонсене çийĕнчех тиесе яма пулчĕ.

Коллектив хĕле хатĕрленет

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Чугунçул станцинчи дежурнăйсемпе стрелочниксем тата килхуçи арăмĕсем çитес хĕле тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç. Кашни участокпа хуçалăхрах хĕле хатĕрленнĕ май конкретнăй ĕçсем туса ирттереççĕ. Çак кунсенче вокзала юсаса лайăхлатрĕç. Унта халь лармалли пукансем, шыв тытмалли баксем çителĕклĕ, çутă пур. Вокзалрах столовăй ĕçлеме пуçларĕ, вăл йышăннă пÿлĕм те таса, çутă.

Стрелочниксем хушшинче хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе ăмăрту сарăлса пырать. Вĕсем кашниех стрелка хуçалăхне хĕллехи условисенче те тĕрĕс, пĕр кăлтăксăр ĕçлеттерме пулаççĕ. Старши стрелочница Любовь Пыринова виççĕмĕш çул ĕнтĕ хăйне çирĕплетсе панă участока лайăх тытса тăрать. Унăн ĕçĕнче пĕр авари е техникăлла правилăсене пăсни пĕрре те пулман. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна пĕрре кăна мар премии панă.

— Поездсем хăвăртрах, пĕр чарăнмасăр çÿреччĕр. Çавăншăн пирĕн тăрăшмалла. Хамăн стрелкăсене эпĕ тĕрĕс-тĕкĕл тытса тăратăп,—тет Пыринова юлташ.

Пыринова юлташ участокри вак-тĕвек ремонтсене хăех тăвать, вăл кирек мĕнле çанталăкра та линисене отлично тытса тăма обязательство илчĕ.

Иван Бочков, Анна Смирнова, Мария Липатова, Николай Табункин стрелочниксем те ĕçре пример кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсен участокĕсенчи стрелкăсене хĕл условийĕнче ĕçлемелле туса çитернĕ.

Станцин коллективĕ хĕле хатĕрленес ĕçе çитес кунсенчех вĕçлессишĕн кĕрешет.

Районри колхозсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе комбайнерсем Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ завод коллективĕ чĕнсе каланине пысăк хăмăлпа йышăнчĕç. Аслă Октябрь революцийĕ XXV çул тултарнă уява пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илмешкĕн вĕсем социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç.

Нумай колхозсем уборка ĕçĕсене пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем авăн çапас, государствăна тырă парас, çĕрулми кăларас ĕçсенче татах та хĕрÿллĕнрех ĕçлеме пуçларĕç. «Коминтерн», «Агроном», «Совет», «Радио» «Путь к социализму» тата ытти чылай колхозсем кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕç, çĕрулмине кăларса пуçтарчĕç, авăн çапас ĕçе пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ. Государствăна обязательство шучĕпе тырă тата МТС ĕçĕшĕн тухакан натуроплатăна пĕтĕмĕшпех парса татрĕç.

Аслă Октябрь умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса районри колхозсем çак çывăх кунсенче конкретнăй ĕçсем туса ирттерме палăртрĕç. Авăн çапас ĕçе район пур йышши тырăсем енĕпе те октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлет, кĕрхи çĕртмене октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех туса çитерет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн çулталăк планне сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурнăçлать.

Государство умĕнчи обязательствăсене тата МТС ĕçĕшĕн тухакан натуроплатăна срокчен парса татас тĕллевпе сентябрĕн 20-мĕшĕнче районри колхозсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ. Государствăн хатĕрлев пункчĕсене вăл кун колхозсем çĕршер тонна тырă тата техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем леçсе пама хатĕрленеççĕ.

Г. ИВАНОВ.

Колхозсен производствăллă çĕнĕ çĕкленĕвĕ

КАЛИНИНО, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Октябрьти аслă революци 25 çул тултарнă уява районри колхозсем ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Владимир Ильич ячĕпе тăракан 70-мĕш номерлĕ завод коллективĕ фронта ытларах пулăшас тĕлĕшпе уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва тухма чĕннине районри колхозсем ырласа йышăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхĕ çĕнĕрен вăйлăн ÿсрĕ.

Районри пур колхозсем те кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕç. Нумай колхозсенче кĕлтесене алăпа йăтса капана хывас ĕç анлăн сарăлнă. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем икĕ кун хушшинче 400 гектар çинчи тырра алăпа йăтса капана хунă, Уйпуçĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз пĕр кун çурă хушшинче 300 гектар çинчи кĕлтесене капана хывրĕ.

Ишлейри «Комбинат», Елменти Пушкин ячĕпе тăракан, Малтикассинчи «Пĕрлешÿ» колхозсем авăн çапса пĕтернĕ. Авăн çапас ĕç ытти колхозсенче те пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ çĕрулми кăларнă çĕрте те, ытти ĕçсенче те пахa тĕслĕхсем кăтартса [illegible] леççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, районри колхозсем çĕрулмине кăларса пуçтарас ĕçе сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, пахча-çимĕçсене сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне, купăстана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пуçтарса кĕртме, тĕштырăсене октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне çапса пуçтарма, государствăна тырă срокчен парса татма хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç.

А. ИВАНОВ

Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Колхозăн чи хисеплĕ тивĕçĕ çинчен манмалла мар

СĔНТĔРВĂРРИ. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара тырпул, пахча-çимĕç боеприпассем пекех кирлĕ. Нумай колхозниксем, колхозницăсем, çакна лайăх ăнланса, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Районри кăшпĕр колхозсем, тĕслĕхрен. «Хĕрлĕ Çар», «Осоавиахим», Кукашни ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ», Шĕнерпуçĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ», Банновски ялсоветри колхозсем тата ыттисем те государствăна тырă парас обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Государствăна тырă парас плана «Малалла», «Восток» тата ытти хăшпĕр колхозсем те ыран-паянах пурнăçлаççĕ.

Анчах та малта пыракан колхозсенчен пример илсе государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн районри пур колхозсем те фронт ыйтнă пек ĕçлемеççĕ-ха. Сĕнтĕрвăрринчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тырă парас плана мĕнпурĕ те 8 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех Урапакасси ялсоветĕнчи «Малалла», Макаç ялсоветĕнчи «Малалла» колхозсем те государствăна тырă парас плана 12—27 процент çеç тултарнă. Ку колхозсен председателĕсем государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене пурнăçласа пырас тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕнче нимĕнле улшăнусем те туман. Государствăна тырă леçсе пама ятарласа организациленĕ бригадăсем ку колхозсенче урăх ĕçсенче пулаççĕ, тырă леçес ĕçе кая хăварса пыраççĕ.

Государствăна тырă парас ĕçе хăвăртрах вĕçлесси колхозра кашни ĕçе хăй вăхăтĕнче туса пынинчен нумай килет. Макаç ялсоветĕнчи «Малалла» колхоз уборкăри ĕçсене черетлĕн тунă пирки пур ĕçсемпе те кая юлса пырать. Колхоз кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, анчах та, молотилкăсене вăхăтра юсаса вырнаçтарса лартман пирки, авăн çапма паян кун та пуçламан, çавăнпа государствăна тырă парас ĕç те чарăнса тăрать. Колхоз кĕлтесене капана хывнă хушăрах авăна çапса государствăна тырă парса татма пултарнă.

Тырă парас плана кашни колхозăн халех пурнăçламалла. Государствăна тырă парас ĕçпе кая юлса пыни çĕршывпа фронт приказне вăхăтра пурнăçламанни пулса тăрать.

С. ПЕТРОВ.

Çĕрулми кăларса пĕтерчĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Чылай колхозсем уйри тырпулсене хăвăрт пуçтарса кĕртнĕ хыççăн, пахча-çимĕçсене тата çĕрулмине кăларма тытăнчĕç. Нумай колхозсем ку ĕçе те пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ.

Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красная звезда», Тăван ялсоветĕнчи «Вперед» колхозсем пилĕк кун хушшинче çĕрулмине пĕтĕмпех кăларса пуçтарчĕç, государствăна çĕрулми парса татрĕç. Мыслец ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Мăн Улхаш ялсоветĕнчи «Подборное» колхозсем те çĕрулмине хăвăрт кăлараççĕ. Сентябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне вĕсем çĕрулмине 80 процент кăларнă.

Районри коммунистсен пухăвĕ

ШАМĂРШĂ. (Телефонпа). Çак кунсенче районри коммунистсем пухăва пуçтарăнса, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси» çинчен йышăннă постановлени районри колхозсенче мĕнле пурнăçланса пынине сÿтсе-яврĕç тата организацилле ыйтусене пăхса тухрĕç. Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ С. П. Никитин юлташ пулчĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа пухура райсовет исполкомĕн председателĕ Космовский юлташ доклад туса пачĕ.

Районри малта пыракан колхозсем кăçалхи вăйлă тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн нумай хут лайăхрах, организованнăрах ĕçлерĕç. Сентябрĕн 10-мĕш тĕлне 19 колхоз уйĕсенчен тырпулсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ, кĕлтесене капана хывас ĕçе 71 процент пурнăçланă, тырăсене пурĕ 30 процент çапнă.

Районри машинно-тракторнăй станци кăçал иртнĕ çултинчен чылаях лайăх ĕçлерĕ. Тырпула комбайнсемпе пухас плана МТС 122,8 процент тултарчĕ. Уйрăм комбайнерсем уборкăра стахановла ĕçлерĕç. Комбайнер Фадеев хăйĕн помощникĕпе пĕрле икĕ комбайнпа 520 гектар тырă вырса пухрĕ. Çавăн пекех Чашкин, Корчаков, Аверьянов, Садовников комбайнерсем те хăйсен комбайнĕсемпе тырă вырас заданисене 200-шер процент ытла пурнăçларĕç.

Анчах районра авăн çапас ĕç кая юлнă. Тырă парас плана сентябрĕн 10-мĕшне 11 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене государствăна парас ĕç те çителĕклĕ пулса пымасть.

Организацилле ыйтусене сÿтсе-явса, пуху Б. А. Вислобоков юлташа ВКП(б) райкомĕн членĕ пулма суйларĕ. Райкомăн пĕрремĕш секретарьне Сивкин юлташа, хăй ыйтнă тăрăх, ĕçрен хăтарчĕ, парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Б. А. Вислобоков юлташа суйларĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкĕпе бронемашинине çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче пирĕн войскăсем противникпа хаяррăн çапăçнă. Гитлеровецсем пехотăпа танксен йышлă вăйĕсене пухса тăратнă пĕр участокра, пысăк çухатусем тÿссе, темиçе урам тытса илме пултарнă. Пĕр кун хушшинче пирĕн боецсем çав урамсенчен пĕр пайне каялла илнĕ. Тепĕр участокра пĕр высоташăн хĕрÿллĕ çапăçусем пыраççĕ. Нимĕçсем çав меллĕ позицие тытса илме хăтланнисем пĕри те ăнăçуллă пулман. Пирĕн чаçсем противникăн атакине сирсе ярса 26 танк, 49 автомашина тата нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем активлăн çапăçнă. Нимĕçсем темиçе хутчен контратакăсем тунă, çав контратакăсене пирĕн боецсем противника пысăк çухатусем тÿстерсе сирсе янă. Н-ски соединенин участокĕнче кăна 10 танк, миномегсен 2 батарейине тата противникăн пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Моздокран хĕвелтухăçнерехре гитлеровецсем 100 танк пулăшса пынипе пирĕн позицисене тăватă хут атакăланă. Оборонăллă вăйлă çапăçусенче пирĕн боецсем нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 900 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Çав участокра нимĕçсен пĕр юсавлă танкне тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Кузьмин юлташ командир пулса тăракан чаçри моряксем, противникпа çапăçса, виçĕ кун хушшинче нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Гитлеровецсен икĕ роти тата темиçе танкĕ Мещеряков лейтенант ертсе пыракан минометсен батарейине атакăланă. Минометчиксем пĕр танка персе çĕмĕрнĕ, 100 нимĕç салтакне çити пĕтерсе тăкнă, противникăн атакине сирсе янă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн чаçсем вăйлăн персе хирĕç тăракан противника атакăланă. Вăйлă çапăçура нимĕçсен пехотине икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, артиллерин 3 батарейине, минометсен 11 батарейине, 13 йывăр пулемет тата темиçе наблюдательнăй пункт пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 8 оруди, 11 миномет, 24 пулемет, винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Курск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Л. юлташ ертсе пыракан отрядĕнчи разведчик-партизансем нимĕçсен аэродромĕ ăçта вырăнаçнине пĕлнĕ. Партизансем темиçе кун хушши çав аэродром çинче мĕн тунине пăхса сăнаса тăнă. Меллĕ вăхăт суйласа илсе, вĕсем çыхăнăва татнă та часовойсене вĕлерсе пĕтеркĕ, унтан «Юнкерс—88» йышши 4 бомбардировщика пĕтерсе тăкнă. Аэродромран кайнă чухне партизансем горючи складне вут чĕртсе хăварнă.

* * *

Нимĕçсен 871-мĕш пехотнăй полкĕн 3-мĕш ротинчен Сталинград районĕнче тыткăна илнĕ Вильгельм Цискольский çапла каласа панă: «Икĕ эрне хушшинчи çапăçусенче пирĕн полк калама çук пысăк çухатусем тÿсрĕ. Хăшпĕр ротăсем йăлтах халсăрланса юлчĕç. Виççĕмĕш ротăра, çынсем хушса панăскерте, 180 çынччĕ. Пĕрремĕш эрне хушшинче çав ротăран 138 çын пĕтрĕ. Юлашки кунсенче тата 22 салтак стройран тухрĕç. Хальхи вăхăтра ротăра мĕнпурĕ те 20 çын кăна. Ытти ротăсенче те çухатусем çавăн пекех пысăк».

* * *

Вилнĕ нимĕç салтакĕ Альберт Вальçумĕнче унăн арăмĕ Мария çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Акă ĕнтĕ эпĕ те пĕр Украинкăна туянтăм. Вăл çирĕп ÿт-пÿллĕ, патвар, пурне те тума пĕлет. Ĕненетĕн-и, эпĕ ăна пĕр минута та ахаль лартмастăп. Вăл кунне икĕ хут çиет. Эпĕ ăна апат юлашкийĕсене паратăп. Пĕчĕк Гельмут апат юлашкийĕсене пухать те пирĕн йытă çиекен савăта ярать, унтан Украинкăна кухньăна кайса парать. Çак украинкăн килте икĕ пĕчĕк ачи юлнă. Вăл пире кураймасть, çакна вăл пиртен пытармасть те. Пирĕн, нимĕçсен, вырăссем мăн-кăмăллăн хирĕç тăнине, парăнманнине пур майсемпе те çапса хуçмалла. Паллах ĕнтĕ, çакна тума питĕ йывăр».

Совет çыннисем çак нимĕç ирсĕрĕн кашни сăмахне асра тытĕç, захватчиксене пирĕн çĕршывăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчи хĕрарăмсемпе ачасен асапĕсемшĕн тавăрĕç.

* * *

Гамбургри (Германия) Бломпа-Фосс судоверфĕн администрацийĕ ĕç нормине тултарман рабочисене вунă куна çити продовольстви карточкисемсĕр хăварать. Хăйĕн нормине тултарман кашни çынна саботажник теççĕ те ăна вара полици асăрхама тытăнать. Кашни кунах гестапона допрос тума вуншар рабочисене чĕнсе илеççĕ. Нумаях пулмасть электросеть авари тÿснĕ пирки полици 40 çынна тытса хупнă. Ютçĕршывсенчен килнĕ рабочисене уйрăмах хаяррăн тыткалаççĕ. Сентябрĕн 5-мĕшĕнче гестаповецсем виçĕ голландеца хăйсен тăван çĕршывне тарса кайма хăтланнăшăн асаплантарса вĕлернĕ.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнчи ирхи пелтерÿрен

Сентябрĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче хаяр çапăçусем пынă. Н-ски часть противникăн темиçе атакине сирсе янă, нимĕçсен 4 танкне, 3 противотанковăй орудине тата 200 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. [illegible] Сталинград хÿтĕлекенсем [illegible] 6 танкне пĕтерсе тăкнă. [illegible] 170 салтакĕсемпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Противникăн вара каялла чакмалла пулнă.

* * *

Моздок районĕнче Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕпи боецсем хаяр çапăçура противникăн 7 танкне, 8 орудине, [illegible] боеприпассем тиенĕ 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вĕлернĕ. Нимĕçсенчен 2 миномет, пĕр оруди, 8 пулемет тата снарядсем тиенĕ 3 автомашина тытса илнĕ. [illegible] Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем, противникăн [illegible] войскисем çине вăйлă персе, 20 автомашинипе [illegible] пехотăн 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Совет летчикĕсем вăйлă çапăçусенче нимĕçсен 12 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Корчин юлташ ертсе пыракан подразделенисем, активлăн çапăçса, противника пăртак каялла чакарнă. Халăх пуранакан пĕр пунктăн [illegible] çапăçу пуçланса кайнă. Çав çапăçура нимĕçсен темиçе çĕр салтакĕпе офицерĕ вилнĕ е аманнă.

Галлин юлташ ертсе пыракан саперсен [illegible] тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Саперсем нимĕçсен [illegible]

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем çĕрле тăшманăн портне тапăннă. Зениткăсен вăйлă вучĕ витĕр тухса, пирĕн летчиксем кăтартнă тĕллевсем çине бомбăсем пăрахнă. Портра 5 тĕлте пушар тухнă тата 6 хутчен взрыв пулнă.

* * *

281-мĕш охраннăй дивизири 704-мĕш полкĕн пĕрремĕш ротинчен тыткăна илнĕ ефрейтор Иосиф Маркович çапла каласа панă: [illegible]

* * *

[illegible] ефрейтор Дюл Янбо [illegible]

* * *

Воронеж облаçĕнчи Николаевка ялĕнче нимĕçсен фашистсем [illegible] Иван Николаевич Озерова тытнă. Гитлерла бандитсем [illegible] Аманнă красноармеец[illegible] не персе вĕлернĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Çурçĕр Кавказ тăвĕсем хушшинче

Совет артиллерисчĕсен ĕçĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Тыткăна лекнĕ лейтенант Франц Хильфингер çапла каласа парать:

— Эпĕ пĕринче сирĕн артиллерин вут-çулăмĕ айĕнче пултăм, хам мĕнле чĕрĕ юлнинчен тĕлĕнетĕп. Вырăс артиллерисчĕсем питĕ лайăх переççĕ. Вырăс артиллерийĕн вут-çулăмĕ пысăк çухатусем кÿнĕ пирки, пирĕн командовани Х. районĕнчен мĕнпур чаçсене илсе тухрĕ.

Тăшман çапла йышăнни нумайăн çинчен калать. Пирĕн артиллери нимĕçсене пысăк сиен кÿрет. Халăх пурăнакан К. пунктра фашистсен 100 автомашина, нумай йышлă пехота, чылай орудисем пухăнса тăнă пулнă. Разведкăпа наблюдательсем панă даннăйсем тăрăх, гварди капитанĕ Хафизов орудисене каçах хатĕрлесе лартма хушнă. Çĕрле, гитлеровецсем çывăрма выртсан, залпсем кĕрлесе кайнă. Гвардеецсем тĕл пенĕ. Вĕсем противникăнне 50 автомашинăран кая мар, полевой тата зенитнăй артиллерин батарейисене, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Моисеенко юлташ командир пулса тăракан батарейăри артиллеристсем пĕр питех те кирлĕ рубежшăн пыракан çапăçура тусем хушшинчи условисене хăвăрт тавçăрса илме пултарнин тĕслĕхне кăтартса панă. Нимĕçсем ту çинчен наступлени пуçласа янă. Салтаксен речĕсем тăвайккипеле аялалла шуса пынă. Батарейăсем йышăнса тăракан хÿтĕри позицисенчен пеме май пулман. Вара Моисеенко приказĕ тăрăх, артиллеристсем хăйсен орудийĕсене уçă позицие илсе тухнă та, наступлени тăвакан противник çине хăвăрттăн пеме тытăннă. Гитлеровецсем совет артиллерисчĕсене хирĕç автоматчиксен пысăк ушкăнне кĕртсе янă. Çапăçу пĕр сехете яхăн пынă. Çав тытăçура артиллеристсем çĕнтернĕ.

Тепĕр участокра нимĕç автоматчикĕсен ушкăнĕ пирĕн боецсем вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайма пултарнă. Подразделенисенчен пĕрин штабĕ умне хăрушлăх тухса тăнă. Çавăн çинчен пĕлсен, старши лейтенант Фещенко командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем орудисене йĕркелесе лартнă та, фашистсен ушкăнĕ çине пеме тытăннă. Батарея тăвайккинче ларнă, вăл вут-çулăм тăкнипе нимĕç автоматчикĕсем мĕнле чупкалама тытăннине боецсем лайăх курнă. Хыçала хăйсен салтакĕсен виллисене пăрахса хăварса, вĕсем каялла, вăрманалла, ывтăннă. Анчах вĕсен çулне пирĕн стрелоксем пÿлсе лартма ĕлкĕрнĕ.

Синявино районĕнче

ФРОНТАН ВОЛХОВ УЧАСТОКĔ, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Синявино районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн подразделенисем тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапса, унăн чĕрĕ вăйне вĕлереççĕ, техникине пĕтере-пĕтере тăкаççĕ тата çирĕплетнĕ пункчĕсене аркатаççĕ.

Юлашки кунсем хушшинче фронтăн пĕр участокĕнче нимĕçсем, малтан çухатнă позицисене каялла тавăрас тесе, темиçе контратака туса пăхнă. Гитлеровецсем наступление пехотăн икĕ полкне яхăн тата танксем нумай кĕртсе янă. Фашистсен контратакине, вĕсене пысăк çухатусем кÿрсе, сирсе пăрахнă. Грушенко лейтенантпа Кондрашов бронебойщик çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсен 5 танкне çĕмĕрнĕ тата темиçе машинине каялла хăваласа янă.

Фронтăн тепĕр участокне нимĕçсем пехотăпа авиаци йышлăн пухса тăратнă. Гитлеровецсем кунта самолетсем чылай илсе килнĕ пулнă. Совет летчикĕсем тăшман аэродромĕ çине тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула аэродром çинче темиçе пушар тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

Офицерсен блиндажĕсенче

ВОЛХОВ ФРОНЧĔ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Моргелов тата Осабов юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисем çавтери хăвăрттăн пырса тапăннипе нимĕçсем, мĕнпур япалисене пăрахса, хăйсен йăвисенчен туха-туха тарнă. Офицерсен блиндажĕсенче гитлерла офицерсем мĕнле пурăннине кăтартакан картинăсем хăйсен пĕтĕм ирсĕрлĕхĕпе пирĕн боецсен куçĕ умне тухса тăнă. Пур çĕрте те час-часах пулакан ĕçкĕсен йĕрĕ паларса тăнă. Çÿлĕксем çинче — ачасен вылямалли япалисем, резинăпа йывăçран тунă автансем выртнă. Пĕр блиндажра боецсем ачасен 29 кĕпине тата хĕрарăмсен 33 платьине тупнă. Вăрă-хураххсемпе çынвĕлерекенсем Германие посылкăсем яма хатĕрленнĕ.

Фотоÿкерчĕксен купи. Колхозница пĕр сĕрт патĕнче вырнаçса ларнă. Унпа юнашар макăракан ачасемпе çаратса пĕтернĕ пурлăхăн юлашкийĕсем. Унтан кăшт айккарахра, хăй тунă ирсĕр ĕçпе киленсе, мăнкăмăллăн таянса фашист ларать. Тепĕр фотокарточка çинче виселица. Асаплантарса вĕлернĕ совет çыннисем патăнче кулакан нимĕçсем тăраççĕ. Тепĕр ÿкерчĕк: офицер тимĕр хĕскĕчпе колхозника асаплантарать.

А. КРАШКЕ.

Пирĕн земляксем

ПИРĔН ГЕРОЙ ВАСИЛЬЕВ

Амăшĕ ĕçрен таврăннсанах ăна письмоносец тăваткал конверт пырса тыттарчĕ. Çыру. Ăçтан килет-ши? Шутласа тăнĕ хыççăн, амăшĕ çырăва уçрĕ. Акă, ывăлĕ тăнă чаçăн штабĕ панă справка:

«Выдана настоящая гр-ке Васильевой Вере Васильевне в том, что ее сын Васильев Борис Михайлович, Герой Советского Союза — батальонный комиссар, находится в рядах РККА, в должности военного комиссара полка...»

Вера Васильевна справкăна темиçе хутчен вуласа тухрĕ. Унăн килйышĕнчи çын — Герой. Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕн çыннисем çак хыпара тепĕр куннех пурте пĕлчĕç, вăл хăлхаран-хăлхана çÿрет. Герой. Истребительпе вĕçекен сокол. Тăван земляккăн ятне Чемей çыннисем пысăк хисепре усраççĕ. Урамра вылякса çÿрекен ачаран пуçласа шур сухаллă старикпе карчăк таранах унăн ятне асăнаççĕ. Çамрăк ачисе хăйĕн ачине шкула вĕренме янă чух: «Эсĕ те Борис пек герой пулма тăрăш, çавăнпа та лайăх вĕрен», — тесе ăсатать; ватçăмарлнсем [illegible] пĕркеленнĕ, кăмăл пек сухаллă старик тата ватă [illegible] ĕç фронтĕнче паттăррăн ĕçлеççĕ.

Халĕ хаяр вăрçă пырать. Урнă нимĕç, юлашки вăйне пухса, Атăла татса тухасшăн тăрăшать; Кубанĕн пуян ĕçсенхирĕсене таптать; Дон шывĕ юнпала юхать, вăл халăх юнĕпе хĕрелнĕ. Пире нимĕç вĕлересшĕн. Эпир вăйлăн хирĕç тăратпăр, халĕр ирĕклĕхе сыхласа хăварасшăн. Эпир нимĕç чурисем пуласшăн мар. Çак хăрушă самантра пирĕн земляк Борис Васильев тăшмана хирĕç çапăçать. Унăн ирсĕр нимĕçсене ытларах та ытларах пĕтерес килет.

Борис 1913-мĕш çулта çуралнă. Куçĕсем ун çивĕч пулнă, икĕ кăвак куçĕ çын çине илĕртÿллĕн пăхнă. Вылямма юратнă, ачасем хушшинче вăл яланах пуçтарулă пулнă.

Унăн биографине малалла илсе пăхсан, вăл Совет Союзĕнчи пиншер çамрăкăнни пекех теме пулать. Борис шкула çамрăклах, çичĕ çул çине пуссанах кайнă. Етĕрне хулинчи мăн аппăшĕ учительница Екатерина Васильевна патĕнче вĕренме тытăнать. Ана Екатерина Васильевна питĕ юратнă: вăл пĕр енчен урăксене юратса вĕреннĕ, учитель каланине тимлĕн итленĕ, тепĕр енчен кăмăллăн калаçнă, ытлашши сăмахсем калама юратман, хăйне-хăй типтерлĕн тыткаланă. Борис кĕнекесене питĕ юратса вуланă, апат çиме ларсан та вĕсене алăран пăрахман. Уйрăмăнах вăл хамăр тăван çĕршывшăн кĕрешнĕ мухтавлă полководецсен пурнăçĕсемпе интересленнĕ. Мĕн вуланине Екатерина Васильевнăна тата юлташĕсене каласа кăтартнă.

Борис Васильев хăйĕн пĕлÿлĕхне ÿстерсех пынă. Çапла вара вăл учитель пулса тăрать, вăл ĕçе 1932 çулта тытăнать те 1935 çулччен ĕçлет. Математикăпа тата физикăпа вĕрентсе, вăл ачасене тарăн пĕлÿ пама тăрăшнă. Унтан Васильев юлташ, авиаци шкулне кайса кĕрес тесе, испытанине хатĕрленнĕ, вара учитель ĕçне пăрахса летчик пулма вĕренмешкĕн кайса кĕрет. Часах унăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланать, летчик-истребитель пулса тăрать.

1937 çулта Борис Васильева Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ. Паянхи куччченех вăл унта. Халĕ ĕнтĕ унăн çапăçуон опычĕ те пысăк. Вăл белофинсене хирĕç хăюллăн кĕрешнĕ. Ют пурлăха хапсăнакан финн вăрă-хурахĕсене вуншарăн-вуншарăн пĕтерсе тăкнă.

Иртнĕ çулти июнĕн 22-мĕшĕ. Çак кун фашистла Германи пирĕн çине вăрçăпа тухрĕ. Борис Васильев нимĕç захватчикĕсене хирĕç тыракан кĕрешÿре геройлăхпа хастарлăх кăтартнă. Çавăншăн ăна правительство Ленин орденĕпе «Золотая звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн ятне парать.

Вăл командованин заданийĕсене яланах вăхăтра пурнăçланă. Вăл фашистла пиратсене нумай пĕтерсе тăкнă. Вĕсене малалла та пĕтерсе пырать. Пирĕн телее, ирĕклĕхе, амăшĕпе хăйĕн килйышне, тăванĕсене хÿтĕлет. Вăл Тăван çĕршыва юратать, тăшмана кураймасть.

— Пирĕн земляк чапа тухрĕ. Пирĕн те, колхоз членĕсен, унран юлмалла мар, — теççĕ колхозниксем. Чăнах та, вĕсем ĕçчен. «Оправа революции» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса тăван çĕршыва фронта ытларах тырпул, аш-какай, ытти апат-çимĕç пама тăрăшать. Вĕсем малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах параççĕ.

Ырми-кашни ĕçлеççĕ вĕсем. Кăçалхи çулшăн государствăпа çăм, çăмарта парса татнă, аш-какай памалли те пĕр центнера яхăн çеç. Кĕлтесене итем çине кĕртсе пĕтернĕ, кĕрпаине планран ирттерсе акнă. Геройăн амăшĕ Вера Васильевăпа мăн аппăшĕ Анна Васильева колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Фронта пулăшмалла! Çавăнпа та вăрçăри пек ĕçлеме тăрăшаççĕ колхозниксем.

Штангă шывĕ шĕмпăлтетсе юхать. Сикме пум ситĕнне улăх. Çаксем йĕмраллă Çĕмĕртлĕх Чемей ялне хĕрÿллĕ ĕçпе пĕрле ытайах илем кÿреççĕ. Вăл герой çуралнă ял. Хăйĕн паттăр земляккне вăл пырă сунса саламлать.

ЯК. СИГАЙ.

Ÿкерчĕк çинче: пирĕн земляк, Совет Союзĕн Геройĕ Васильев юлташ летчиксен шкулĕнче вĕреннĕ чухне

Ют çĕршывсенче

Лондонра чехословаксен фашизма хирĕçле комитетне тунă

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Пичет çапла пĕлтерет: Германирен тухса пынă фашизма хирĕçле чехословаксен представителĕсенчен Англире пĕрлешÿллĕ çĕнĕ комитет тунă. Çĕнĕ комитет хăйĕн умне — «Чехословакире фашизма хирĕçле ĕçе анлăн сарса ярас тата нимĕçсене хирĕçле саботажа вăйлатас, çар производствине аркатса пырас, транспорта дезорганизацилес, Судет облаçĕнче партизанла кĕрешÿ организацилес» задачăсем лартать.

ИСПАНИРИ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Испани республиканецĕсен Мексикăра тухакан бюллетенĕнче Испанирен Мексикăна нумаях пулмасть пынă çынсем каласа панине пичетленĕ. Çав çынсем каланă тăрăх, Испани халăхĕн пысăкрах пайĕ Испания вăрçа хутшăнассине хирĕç тăраççĕ. Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем ÿссе пыраççĕ. Юлашки уйăхсенче пĕтĕм Испанире саботажла ĕçсем йышлăланнине палăртнă.

Партизансем Астурире активлăн кĕрешеççĕ. Испанире вăрттăн ĕçлекен политикăллă организацисем тата вăрттăн тухакан хаçатсем вăйлăрах ĕçлени палăрать; вĕсем Франкопа фашистла фалангăна хирĕç тăраççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран килнĕ аманнă «легионерсем» нумайĕшĕ халĕ испанецсене Совет Союзĕнчи фронта ярассине хирĕç туха-туха калаççĕ, унта «чăн-чăн тамăк», теççĕ вĕсем.

Франко квалификациллĕ рабочисене халĕ те Германие ярать. Нимĕçсем Испание ытларах та ытларах хăйсен аллине çавăрса илсе пыраççĕ.

ВЕНГРИЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇĔНĔРЕН ÇАРАТНĂ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Германин хуçалăх министрĕ Функ Бухарестра пулнă хыççăн Будапешта пынă. Вăл мĕншĕн Венгрие пынине «Нейес винер тагблад» ятлă гитлерла хаçатра уççăнах каласа панă. Унта çапла çырнă: «Германия Венгрия ăна ялхуçалăх продукчĕсем тата ытларах парса тăтăр тесе тăрăшать», тенĕ.

Гитлерла хаçат çакна йышăнать: Германия Венгрирен, вăл мĕн чухлĕ тырă пухса илессине пăхмасăрах, ялхуçалăх продукцийĕ ытларах ыйтни, пĕр енчен, Германин Совет Союзĕнчи оккупациленĕ районсенчен тырă кÿрес шанчăкĕ пĕтсе ларнинчен килет.

«Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ облаçсемпе тивĕçлипе усă курма тытăначчен,—тет хаçат,—Венгрирен ялхуçалăх продукчĕсем илсе тухассине ÿстерсе яни питĕ кирлĕ», тет. Хаçат çакна асăрхаттарать: Германия Венгрие малашне те хăйĕн аграрлă хушмалчи тесе шутлĕ, тет.

НИМĔÇСЕМ ФРАНЦИРЕ ХЕÇПĂШАЛЛĂ ВЫСТУПЛЕНИСЕМ ПУЛАССИНЧЕН ХĂРАÇÇĔ

НЬЮ-ИОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Парижра пурăнакан нимĕçсем халĕ урамсенчи çапăçусен тактикине вĕренеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Францире хĕçпăшаллă выступленисем пулассинчен хăраççĕ. Германи влаçĕсем Франци халăхне нимĕçсем вĕреннĕ çĕре ÿреттереççĕ, вĕсем Француасене хăратас тесе çапла тăваççĕ.

Каирта гестапо отрячĕсене вăйлăлатнă. Хулара асаплантарса вĕлермелле тунă çынсен хушамачĕсене кăтартса çырнă пĕлтерÿсем çыпăçтарса тухнă.

Люксембург халăхне массăллăн ссылкăна яни

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нимĕçсем Люксембург халăхне массăллăн ссылкăна яма тытăннă. Ссылкăна яма тивĕçлĕ çынсен пĕрремĕш ушкăнне пухса çитернĕ те ĕнтĕ. Кирлĕ пулсан, нимĕçсем çĕршыври пĕтĕм халăха илсе тухса каясси çинчен калаççĕ тата Люксембурга нимĕç рабочийĕсене илсе килессипе хăратаççĕ. Çакна ăна нимĕçсем шахтăсемпе металл завочĕсенче, Германин вăрçă машинишĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăраканскерсенче, ĕçе малалла туса пырас шутпа пурнăçа кĕртме шутлаççĕ. Иртнĕ эрнере Люксембургра пуçланнă пĕтĕмĕшле забастовка малалла пырать.

Болгари хаçачĕ халăха „сахалтарах шухăшлама“ сĕнет

СОФИЯ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарсен «Утро» хаçачĕ Болгари халăхĕ хальхи вăхăтра пулса иртекен событисем çине питех те активлăн пăхнă пирки тарăхать. Çав тĕлĕпле ятарласа çырнă статьяра хаçат халăха «сахалтарах шухăшлама тата сахалтарах калаçма» сĕнет. Болгарсене «хăйсемшĕн фюрер шухăшлакан» нимĕç салтакĕсем пек пулма чĕнсе, хаçат çапла çырать: «Эпир вĕсемпе танлашма тивĕç. Сахалтарах шухăшлар, сахалтарах пĕлер, çавăнпа эпир хамăра кăна усă тăвăпăр», тет.

РУМЫНИРЕ СЛУЖАЩИСЕМ ХЫÇÇĂН ПОЛИЦИ ЙЕРЛЕТ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Государство аппаратĕнчен Германие хирĕçле шухăш-кăмăл тытакан служащисене тасатас тĕллевпе Антонеску правительстви чылай мероприятисем туса ирттернĕ пулин те, Румыни учрежденийĕсенчи оппозициллĕ шухăш-кăмăлсем пĕрре те вăйсăрланман. Çавна пула Румыни правительстви приказ кăларнă. Çав приказпа кашни учреждение çирĕп контроль туса тăма палăртнă. Приказа пурнăçа кĕртме секретлă организаци тăваççĕ. Унăн задачи кашни служащийĕн шухăш-кăмăлне сăнаса тăрасси пулса тăрать. Çав приказпа служащисем хушшинчи «саботажниксемпе пăлхавçăсене» вĕлермелле тунă.

ТАНИНЕ ЯПОНИН ЮТÇЕРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТНĂ

ТОКИО, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин информаци совечĕн председательне Масаюки Танине ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартнă. Çав поста Того отставкăна тухнă хыççăн вăхăтлăха премьер-министр Тодзио йышăнса тăнă пулнă. Çĕнĕ министр хăйĕн тĕп ĕçĕпе пĕрлех информаци совет председателĕн постне те йышăнса тăрать.

Парторганизацисен секретарĕсене, вĕсен заместителĕсене тата агитколлективсен руководителĕсене пĕлсе тăма

Парти журналĕсене çырăнса илме лимит хушса панă. Союзпечатьрен (почта çуртĕ) сентябрĕн 21-мĕшĕнчен кая юлмасăр çырăнмалла.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО“ (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—3 Дирекция.

Чувашпотребсоюзу требуются для работы в Чебоксарах и районах: бухгалтера-ревизоры, начальник транспортного отдела, инструктора общепита, хлебопечения, оргтодела и отдела кадров.
Обращаться: г. Чебоксары, Театральная, 1/5

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 834 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 24 п. н.